26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944
ФЕВРАЛЬ
26
ШАМАТКУН
40(6535) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Фронтовой уйăхлăха большевикла ирттерер

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май панă приказне савăнса итлерĕç. Сталин юлташăн историллĕ приказĕ çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать, наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара пулăшас кăмăла татах та ытларах ÿстерет.

Пирĕн умри чи ответлă задачăсенчен пĕри вăл — çуракине вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек хатĕрленесси пулса тăрать. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, ĕнер республикăра çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх пуçланчĕ. Фронтовой уйăхлăх вăхăтĕнче кашни колхозрах вăрлăх хывса çитермелле, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тата лаша кÿлмелли хатĕрсене юсаса хумалла.

Чи ответлă ĕçсенчен пĕри вăл çуракине кирлĕ вăрлăха пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитересси пулса тăрать. Анчах та уйрăм районсенче вăрлăх хывас ĕç ытла та начар пулса пырать. Февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне вăрлăхсене Çĕмĕрле районĕ 59,6 процент, Чкаловски район 60,7 процент, Пăрачкав районĕ — 60,4 процент, Шăмăршă районĕ 48,9 процент кăна хывнă. Çапла пулсан та çав районсенче вăрлăхсем хатĕрлес пирки кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Чкаловски районри «Ударник» колхоз 1040 центнер вăрлăх хывас вырăнне 348 центнер çеç хывнă, «Первое мая» колхоз 354 центнер вырăнне — 124 центнер хывнă. Еç çакăн пек япăх тăрать пулсан та, çак районсенчи колхозсенче вăрлăх тĕлĕшпе пĕрпĕрне пулăшассине тата уйрăм колхозниксенчен вăрлăх пухассине организацилемен.

Комсомольски районри «Трактор» колхоз кÿршĕри вăрлăх çитмен колхозсене 25 гектар çине акмалăх вăрлăх парать. Çак колхоз председателĕ Иванова юлташ хăйĕн тырринчен вăрлăх 30 пăт хывать. Çакăн пек патриотла пархатарлă ĕçе Елчĕк, Красноармейски тата ытти районсенче те чылай тĕл пулма пулать. Колхозлă ял хресченĕсен çак патриотла пуçарăвне кашни колхозра йышăнса илсе, анлăн сарса ямалла.

Хывнă вăрлăха тасатасси, ăна кирлĕ пек кондицие лартасси паянхи чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Районсем ку тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ-ха. Улатăр, Советски, Красноармейски районĕсенчи колхозсем хывнă вăрлăха çуррине те кирлĕ пек тасатман. Елчĕк районĕнче вăрлăха 92 процент тасатнă, çав вăхăтрах кунта хывнă вăрлăхăн нумай пайне кирлĕ пек кондицие çитермен. Вăрлăх тасатас, ăна кирлĕ пек кондицие лартас тĕлĕшпе халех пур колхозниксене те мобилизацилемелле. Ку ĕçре сортламалли машинăсемпе туллин усă курмалла, машинăсем çитмен колхозсенче çавра алапа алассине, пăрçа йышши культурăсене алăпа суйлассине организацилемелле.

Комсомольски, Шăхасан, Красноармейски, Йĕпреç, Елчĕк, Шупашкар тата Ишлей МТС-ĕсем тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсассине вĕçлерĕç. Февраль уйăхĕнче тракторсене юсас тĕлĕшпе Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне МТС-ĕсем япăх ĕçленине палăртмалла. Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ январĕн 25-мĕшĕ тĕлне ку тĕлĕшпе 24-мĕш вырăна анса ларчĕ, Канаш МТС-ĕ çав вăхăтрах 9-мĕш вырăнтан 20-мĕш вырăна куçрĕ. Вăл февраль уйăхĕнче 12 трактор юсас вырăнне пĕр трактор та юсаман. Улатăр, Канаш МТС-ĕсем юлса пынине витме нимĕнле сăлтавсем те çук, мĕншĕн тесен çак МТС-семпе юнашарах промышленноçăн пысăк предприятийĕсем пур, вĕсем МТС-сене ялан пулăшма пултараççĕ. Кунта МТС-сен руководителĕсем ĕçе кирлĕ пек организацилеменни кăна чăрмантарса тăрать.

Ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен государство планне чи лайăх пурнăçлассишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн Марипе Мордва АССР-семпе социализмлă ăмăртăва тухса, Чăваш республики çине пысăк обязательствăсем илчĕ. Социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсем пирĕн малашнехи ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăмалла. Çав обязательствăсене Отечественнăй аслă вăрçă ыйтнисене, кăçалхи ялхуçалăх çулĕн уйрăмлăхĕсемпе йывăрлăхĕсене те шута илсе тунă. Илнĕ обязательствăсене пурнăçлама пирĕн пур условисем те пур. Çавна тăвас тесен, йывăрлăхсене çĕнтерме пĕлни тата пĕтĕм вăя ĕçе мобилизацилеме пултарни çеç кирлĕ.

Тăванлă республикăсен ăмăртăвĕнче илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçламалла тăвас тесен, пирĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăнас пулать. Кашни колхозникпе колхозница, МТС-семпе совхозсенчи кашни работник, ялхуçалăхĕнчи кашни специалист ăмăртура мала тухас кăмăлпа çунса ĕçлени кирлĕ, фронт умĕнчи, Хĕрлĕ Çар умĕнчи тăван çĕршыв умĕнчи хамăрăн тивĕçе туйса ĕçлени кирлĕ.

Тăванлă республикăсен ăмăртăвĕ пуçланчĕ. Вăл кашни МТС-ра, колхозсемпе совхозсенче, колхоз бригадисемпе уйрăм звеносенче анлăн сарăлса каймалла. Халĕ пуçланнă фронтовой уйăхлăхра пур колхозсемпе совхозсен, МТС-сен большевикла ĕçлесе, çуракине пур енчен те, пĕтĕмпех хатĕрленсе çитмелле.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май панă хăйĕн приказĕнче совет хресченĕсен ĕçне пысăка хурса хакларĕ, тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкас тесен татах та ытларах вăя хурса ĕçлеме чĕнчĕ. Сталин юлташăн приказĕ — тăван çĕршыв приказĕ, çавăнпа та ăна пурнăçласси чыслă та ответлă ĕç пулса тăрать. Сталин юлташăн приказне пурнăçлассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлер. Социализмлă ăмăртăвăн ялавне тата çÿлерех çĕклер!

Сталин юлташăн приказĕ Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшма чĕнет

КАЛИНИНО, февралĕн 25-мĕшĕ. **(Телефонпа).** «Красноармеец» колхозра ĕнер Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ 1944 çулхи февралĕн 23-мĕшне кăларнă приказа ăнлантарса пачĕç. Пухăва 145 колхозник пынă. Пухура бригадир Макарова юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Юратнă полководецăн приказне ответлесе, эпĕ малашне халичченхинчен темиçе хут лайăхрах ĕçлеме, мартăн 10-мĕшĕччен çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитме пулатăп, —терĕ вăл.

Приказа ăнлантарса панă хыççăн колхозниксем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухас тĕлĕшпе татăклă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем мартăн 1-мĕшĕччен вырăнти удобренисем хатĕрлемелли плана пурнăçлама, вăрлăхсене тивĕçлĕ кондицие лартса çитерме, ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерме пулчĕç.

М. АНДРЕЕВ.

Çулпуç приказĕ хавхалантарнипе

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатри рабочисемпе работницăсем Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказне сÿтсе-явнă хыççăн татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме пулчĕç.

— Хĕрлĕ Çар вăрçă хирĕнче çĕнтерÿллĕ наступлени туса пырать. Гитлерла Германи пĕтсе ларасси патнелле çывхарать. Тылри ĕççыннисем пур отраслĕсенче те фронтовиксемпе танлашма тăрăшаççĕ, производствăри чаплă çитĕнÿсемшĕн вăйхала шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Эпир фронтри пекех ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр, çĕршыва фронта кирлĕ чухлĕ продукци парса тăрăпăр,—терĕç комбинатра ĕçлекенсем.

Павлов юлташ ертсе пыракан цех уйăхран уйăхах мала тухса пырать. Костин, Тартанов, Сапожников юлташсем ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем кулленех задание икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Тартанов юлташăн бригади хăшпĕр кун 20-шер сехет цехран тухмасăр ĕçлет. Пĕр сменăрах виçĕ кунхи задание пурнăçлать.

Леонтьев юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри стахановецсем Волков, Козлов, Павлова юлташсем ĕç нормине тăтăшах 280 процента çити тултараççĕ.

Çулпуç приказне сÿтсе-явнă хыççăн комбинат коллективĕ, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, кашни уйăхрах производство планне срокчен тултарса пыма пулчĕ.

Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа пулнă чаплă лару

ÇĔМĔРЛЕ, февралĕн 24-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа районри пур колхозсенче тата предприятисемпе учреждениесенче чаплă ларусем пулса иртрĕç

Партипе совет тата общество организацийĕсен хулари ларăвĕнче Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарни çинчен Фоминых юлташ доклад туса пачĕ.

Лару хыççăн концерт пулчĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем СТРУГИ КРАСНЫЕ чугун çул станцийĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра çаплах наступлени туса пынă, Ленинград облаçĕнчи СЕРЕДКА район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă. Вĕсен шутĕнче — БАГЛИЦЫ, ЗАХОДЫ, МИШОКОЛЬ, ЕРЕХНОВО, ЗАКРУПИЧЬЕ, ПУСТОЕ ЛЕСКОВО, ЩЕГЛИ, МОЛОЖАНИ, ТУЖЕРИНО, ПЕРЕХОЖА, РАДЕЖА, МАЯКОВО, КОЧЕРИЦЫ ялĕсем тата БОРОВИК, СЕРЕДКИНО, ВЛАДИМИРСКИ ЛАГЕР ятлă чугун çул станцийĕсем.

ИЛЬМЕНЬ кÿллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Балтика çумĕнчи 2-мĕш фронт çарĕсем, Ленинград фрончĕн çарĕсем тÿрех пулăшнипе, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, февралĕн 24-мĕшĕнче ДНО хулипе пысăк чугун çул узелне штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вĕсен шутĕнче — ВЯЗЬЕ, ВОРОБИНО, ВЕРЕТЬЕ, ОПОКА, ВОШКОВО, СУХАРЕВО, ЮРКОВО, БОЛЬШОЕ ТРЕСНО, СКУГРЫ, ГОЛОВИНО, ЧЕРНЕВО, СЕВЕРНОЕ УСТЬЕ, ОСТРЫЙ, КАМЕНЬ, ГОРОДНЯ, БРОДКИ ялĕсем тата ВЯЗЬЕ ятлă чугун çул станцийĕ.

ХОЛМ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ. Вĕсен шутĕнче — ЦЕВЛО, МАКАРИНО, ВИХРИЩЕ, ЯМНО, ЮХОВО, ОСИНОВКА, КОРЕЛКИ, ХАРАЙЛОВО, ШЕРПОСОВО ялĕсем тата САМУЛОКОВО ятлă чугун çул станцийĕ.

Çак кунсенче БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем РОГАЧЕВ хули районĕнче вырнаçса тăракан фашистла нимĕç çарĕсене хирĕç наступлени пуçласа янă. ДНЕПР шывĕ урлă ăнăçлă каçнă хыççăн пирĕн çарсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине фронт сарлакĕшĕпе 50 километр татнă та, виçĕ кун хушши хаяррăн çапăçса, 20—25 километр малалла куçнă, вара февралĕн 24-мĕшĕнче РОГАЧЕВ хулипе пысăк чугун çул станцине — тăшманăн Бобруйск енчи тĕреклетнĕ паха пунктне — штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вĕсен шутĕнче — НОВЫЙ БЫХОВ, ЛАЗАРЕВИЧИ, ВИЛЯХОВКА, ВЕРХНЯЯ ТОЩИЦА, НИЖНЯЯ ТОЩИЦА, КИСТЕНИ, ВИЩИН, ДЕДОВО, ЕЛЕНОВО, МАДОРЫ, СЕЛЕЦ, СТАРОЕ СЕЛО, ОЗЕРАНЕ, БОЛЬШАЯ КОНОПЛИЦА, МАЛАЯ КОНОПЛИЦА, ЗАБОРОВО, ТУРСК, ХОДОСОВИЧИ, ЦУПЕР, ЛУГОВАЯ БАРНЯ, КОЛЫБОВКА ятлă пысăк ялсем тата ТОЩИЦА ятлă чугун çул станцийĕ. Пирĕн çарсем нимĕçсен Днепр шывĕн сулахай енчи РОГАЧЕВПА ЖЛОБИНРАН хĕвелтухăçнерехри паха плацдармне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче артиллерипе миномётсем персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 29 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Струги Красные чугун çул станцийĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Ленинград облаçĕнчи Середка район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Пĕр соединени чаçĕсем халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктшăн пынă çапăçура 700 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 10 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă пĕтерсе тăкнă. Тепĕр районра совет çарĕсем нимĕç пехотин пĕр полкне аркатса тăкнă. Гитлеровецсен пĕр пĕчĕк пайĕ кăна, хăйсен полкĕн хĕçпăшалĕпе çар пурлăхне пăрахса тарса, çăлăнса юлнă.

* * *

Ильмень кÿллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ĕнер Дно хули патне пырса тухнă та тăшманпа хула тулашĕнче çапăçма тытăннă. Нимĕçсем ку района васкасах икĕ пехотнăй дивизи куçарса пынă, питĕ хытă хирĕç тăнă. Çĕрле совет çарĕсем тăшманпа тĕрлĕ енчен çав тери хăвăрт атакăланă та хаяр çапăçусем хыççăн Дно хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Пирĕн çарсем, тăшманăн аркатса тăкнă чаçĕсене хăваласа пырса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла тата Дно хулинчен кăнтăртарахра ларакан Вязье ятлă чугун çул станцине йышăннă.

* * *

Белорусси фрончĕн çарĕсем темиçе кун çитет ĕнтĕ, наступлени пуçласа янă. Пирĕн артиллери хăватлă персе хатĕрленĕ хыççăн тата хамăр авиаци бомбăсем тăкса вăйлă пырса çапнă хыççăн, совет çарĕсем нимĕçсен Днепр шывĕн хĕвелтухăç енчи оборонине татнă. Пирĕн чаçсем пĕрин хыççăн тепри Днепр шывĕ урлă хăвăрт каçнă та, тăшмана тăна кĕме памасăр, нимĕçсен Днепр шывĕн хĕвеланăç енчи траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тата унăн контратакисене сире-сире ярса, совет боецĕсем çав тери хăвăрт малалла куçнă та Рогачев хулипе Могилев хули хушшинчи чугун çула татнă. Рогачев хулишĕн пуринчен те вăйлăрах çапăçмалла пулнă. Пирĕн çарсем нимĕçсене фронтран пыра-пыра çапнă, çав вăхăтра пирĕн çарсен пĕр пайĕ вăрмансем, шурлăхсем хушшипе пырса, тăшмана флангран çавăрса илнĕ. Паян пирĕн боецсем Рогачев хулине — нимĕçсен Бобруйск енчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне — штурмласа туртса илнĕ. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк сухатусем кÿнĕ. Пирĕн пĕр соединени кăна 4000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 24 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă пĕтерсе тăкнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, çав соединени боецĕсем нимĕçсене 62 тупă, 27 миномет, 120 пулемет, 35 радиостанци тата боеприпассемпе çар пурлăхĕн темиçе складне тытса илнĕ. Тыткăна чылай илнĕ.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен «Фашизма вилĕм» ятлă отрячĕ пĕр уйăх хушшинче, минăсем лартса, нимĕçсен çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 80 автомашинине сирпĕнтерсе янă. Унсăр пуçне, партизансем 4 паровоз тата салтаксемпе хĕçпăшал турттарса пыракан 30 вагона ÿпĕнтерсе янă. Лазо ячĕпе тăракан партизансен отрячĕ, засадăран тухса, нимĕçсен обозне тапăннă, обоз хуралне пĕтерсе тăкса, боеприпассем, тумтирпе апат-çимĕç нумай тытса илнĕ.

* * *

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарни çинчен панă приказа красноармеецсем, краснофлотецсем, сержантсем, офицерсем тата Хĕрлĕ Çар генералĕсем çав тери хавасланса кĕтсе илнĕ. Фронт патĕнчи тата тылри гарнизонсенче, çавăн пекех тата май килнĕ çĕрте фронтри нумай участоксенче те, йышлă халăх пухăннă митингсем пулса иртнĕ.

Украинăри 1-мĕш фронтри пĕр чаçра пулса иртнĕ митингра старши сержант Овчинников юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Хĕрлĕ Çар хăй 26 çул тултарнă куна çав тери чаплă çĕнтерÿсем тунипе уявласа ирттерет. Пирĕнтен нумайĕшĕ чаплă та мухтавлă ĕçсем туса ирттернĕ, нимĕç захватчикĕсене хирĕç Мускав, Сталинград, Курск патĕнче тата Днепр çинче çапăçнă. Ку вырăнсенче Хĕрлĕ Çар гитлеровецсене йывăр поражениесем кÿнĕ. Анчах та эпир лăпланса ларма пултараймастпăр. Тăшмана пĕтермеллех çĕмĕрсе тăкайман-ха. Эпир ăна тата вăйлăрах пыра-пыра çапăпăр, хамăр çулпуçăн приказне чыслăн пурнăça кĕртме хамăрăн пĕтĕм вăй-хала хурăпăр». Подполковник Плагин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçра пулса иртнĕ митингра красноармеец Яргачев юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Тăван çĕршыв пире хăйĕн пурнăçĕпе кунçулне шанса пачĕ, пирĕн алла питĕ хăватлă хĕçпăшал пачĕ. Тупа туса калатăп çакă, Сталин юлташ, эпĕ хам кăкăрти юлашки сывлăш тухиччен, ылханлă гитлеровецсене пĕтерсе тăкиччен çапăçма пулатăп».

Украинăри 3-мĕш фронтра подполковник Смоляков юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçра пулса иртнĕ митингра майор Мартынюк юлташ çапла каланă: «Сталин юлташ пирĕн Хĕрлĕ Çар иртнĕ çул хушшинче тунă çĕнтерÿсен мухтава тивĕçлĕ итогĕсене кăтартса пачĕ, фашистла нимĕç захватчикĕсене татăклăн çĕнтерсе тăкмалли çула сутатса пачĕ. Гитлер çарĕ пĕтсе ларас патнех çитнĕ. Анчах та тăшман тĕнсĕр шăтăка хăй ирĕкĕпе сикмĕ çук. Ăна вилĕм шăтăкĕ патне илсе çитерсе, унта тĕртсе ямалла. Эпир совет воинĕсем Сталин юлташăн приказне чыслăн пурнăça кĕртĕпĕр, хамăрăн Тăван çĕршыва фашистла ирсĕрсенчен тасатăпăр».

Балтика çумĕнчи 2-мĕш фронтра пĕр чаçра пулса иртнĕ митингра сержант Тимошко юлташ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Эпĕ хытă савăнатăп, çавăнпа та питĕ хытă хумханатăп. Çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çар ĕнер манăн тăван хулана — Кривой Рога ирĕке кăларчĕ. Сталин юлташăн приказĕ пире совет хĕçпăшалне мухтава кăлармашкăн çапăçусенче çĕнĕрен те çĕнĕ чаплă ĕçсем тума хавхалантарать. Нимĕç —

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

ÇССР Оборона Халăх Комиссарĕн заместителĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. ЖУКОВ.

ÇССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ патĕнче пулнă йышăну

Февралĕн 23-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă май, ССÇР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов дипломати корпусĕ валли йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура Ют çĕршыв посольствисемпе миссийĕсен пуçлăхĕсем тата ответлă сотрудникĕсем, çар, тинĕс-çар тата авиаци атташисемпе вĕсен помощникĕсем, çар миссийĕсен начальникĕсемпе членĕсем пулнă.

Йышăнура çавăн пекех тата СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ Н. М. Шверник, Маршал К. Е. Ворошилов, А. И. Микоян, Л. М. Каганович, А. Я. Вышинский, А. М. Косыгин, В. А. Малышев, адмирал Н. Г. Кузнецов, Маршал Б. М. Шапошников, Маршал С. М. Буденный, бронетанковăй çарсен Маршалĕ Я. Н. Федоренко, инженернăй çарсен Маршалĕ М. П. Воробьев, генерал-полковник А. С. Щербаков, Халăх Комиссарĕсем чылайĕшĕ, Ют çĕршыв Ĕçĕсен тата Тулашри сутуилу Халăх Комиссарĕсен заместителĕсем, Оборона Халăх Комиссариачĕн, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн тата ытти сен те ответлă работникĕсем, çавăн пекех тата ученăйсем, писательсем, артистсем, совет пичечĕпе ют çĕршывсен пичечĕн представителĕсем пулнă.

Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовойĕсене Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар офицерĕсен, сержанчĕсен тата рядовойĕсен пĕр ушкăнне, **Ленин** орденĕпе тата **«Ылттăн çăлтăр»** медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Совет Союз Геройĕн ятне мĕнпурĕ 6 офицера, сержанта тата рядовоя панă. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Музыка искусстви тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемшĕн чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн çак работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Филипп Миронович **Лукина** композитора, художествăллă руководителе.
2. Зинаида Михайловна **Павловăна** — артисткăна.
3. Иван Дмитриевич **Шубина** — артиста.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи февралĕн 18-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЕН УКАЗĔ

М. Е. Измайлова Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕн ятне парасси çинчен

Музыка искусстви тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн артистне Михаил Евгеньевич **Измайлова** Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕн ятне парас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи февралĕн 18-мĕшĕ.

Укçа-тенкĕ парăмне срокчен парса татаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Опыт» колхоз членĕсем, паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерÿвĕсемпе хавасланса, çĕршыв умĕнчи пур парăмсене те срокчен парса татма тăрăшаççĕ. Паянхи куна ку колхозра военнăй налог укçине 60 процента яхăн парса татнă. Çавăн пекех самообложени, ялхуçалăх налогĕсене тÿлесси те ăнăçлăн пырать.

И. АНДРЕЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВЛĂ СВОДКĂН ВĔÇĔ

захватчикĕсене тĕппипех çапса вĕлерсе пĕтеричченех эпир лăпланса лармăпăр».

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр авиаци полкĕнче пулса иртнĕ митингра капитан Вайгачев юлташ çапла каланă: «Балтика тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕс патне çитиччен пирĕн Хĕрлĕ Çар наступленин туса пырать, тăшмана тăван çĕршывран хăвалать. Нимĕç çарĕ катастрофа умĕнче тăрать. Штурмовик летчиксем хăйсен çапăçури мастерлăхне яланах лайăхлатса пыраççĕ, вĕсем тăшмана тата хаяртарах çиллĕнсе çĕмĕрсе аркатма пулаççĕ».

Пĕр чаçри боецсемпе офицерсен митингĕнче кĕçĕн сержант Кодырбаев юлташ çапла каланă: «Вăрçă пуçланнăранпа эпĕ те темиçе вунă нимĕç бандитне вĕлернĕ. Эпĕ вĕсене мана казах халăхĕ хушнă пек пенĕ. Гитлер шаккалĕсене вĕсем вырăс халăхне украинецсене, белоруссене кӳнĕ хуйхăпа асапсемшĕн, совет çыннисен куççулĕсемшĕн пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыратăп. Сталин юлташ пире тăшмана татăклăн çĕнтермелли çула уççăн кăтартса пырать. Эпир пурте, пĕр çын пек пулса, Сталин приказне пурнăçа кĕртĕпĕр».

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Ĕмĕр манми паттăр ĕç

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Çеçен хир варринче, пĕр çырма хыçĕнче, нимĕçсен тăватă йывăр танкĕ тăрать. Вĕсем вырăнтан хускалаймаççĕ ĕнтĕ. Вĕсен кӳлепписене шăтарса, çĕмĕрсе пĕтернĕ. Вĕсем çинчи тупăсем аялалла пĕшкĕнсе, кăмăсисемпе çĕре тăрăннă. Вĕсен башнисене, кушак хăй тытнă шăшие лӳчĕркенĕ пек, тылласа аяккисене хуçлатнă, чавачава кăларнă, лапчăтса лартнă. Вĕсен гусеницисене тата-тата пăрахнă та, халĕ вĕсем юр çинче сапаланса выртаççĕ.

Кам пулнă-ши ку танксене çапса лартакан?

Ку çапăçу вăл — пĕртан çапăçу пулман. Çĕрме пуçланă икĕ тункката кутне Абдулов комсомолец çитсе выртнă. Унăн аллинче мĕн пурĕ те танка хирĕç пемелли пăшал кăна пулнă. Анчах та вăл хăй çамрăк, хĕрӳ боец, çирĕп чунлă çын, пĕр тума шут тытнă ĕçрен нихăçан та пăрăнса тăман боец пулнă. Тункатасем патĕнче ăна нумайччен кĕтсе выртма тивмен. Тӳпе хыçĕнчен нимĕç танкĕсем сиксе тухнă. Пĕр харăс 6 танк. Улттăшĕ те йывăр танксем, «тигрсем». Вĕсем шăпах Абдулов çине тӳп-тӳрĕ çул тытнă. Бронебойщик хăраса ӳкмен. Вăл, хăнăхса çитнĕ кулленхи ĕçе тунă чухнехи пекех, лăпкăн тĕллет те, персе ярать. Виç-тăватă секунда иртет-и, иртмест-и, малти танкне хура тĕтĕм ярса илет, тĕтĕм витĕр вут чĕлхисем ялкăшма пуçлаççĕ. Пирĕн паттăр боец тепре персе ярать, унтан виççĕмĕш хут перет. Малти танк хыççăн пыракан икĕ танк, чарăнса ларса, пĕр вырăнта арман çунаттисем пек, йĕри-тавра çаврăнма пуçлаççĕ. Часах вĕсенчен вăйлă пушарти пек вут хыпса тухрĕ.

Анчах та пĕр «тигрĕ», малалла ыткăнса ӳксе. Абдулов окопĕ çине пырса кĕнĕ, вăл совет бронебойщикне таптаса вĕлерме шутланă. Абдулов позицине ку танк нумайччен «якатнă». Çапах та вăл совет паттăрне вĕлереймен, анчах та совет улăпĕн те тек пĕр патрон та пулман, веçех пĕтнĕ. Вăл тек пăшалпа пеме пултарайман. Вилĕмрен хăраса тăман герой тăпрапа хутшăннă юр айне пулнă, унăн аякĕсем ыратнă. Анчах та вăл хăй çинчи çĕре аллисемпе чавалаласа аяккалла сирнĕ, тăпрапа юр айĕнчен çиеле тухнă.

Тухнă, анчах танк каялла таврăнса каллех ун çине пыма пуçланă. Халĕ ĕнтĕ ишĕлсе аннă окопра тек çăлăнса юлма мел пулман. Абдулов противотанковăй гранатăсене ярса илнĕ те хăй хĕвне, пиççихи хыçне чикнĕ, юлашкине пиçиххи çумне çыхнă та, хăй çине таптаса кĕме пуçланă танк айне тӳрех вăркăннă. Пĕтĕм çеçен хир тăрăх, вăйлă взрыв сасси янтраса кайнă. Çав самантрах «тигр» та пĕрре çӳлелле сиксе илнĕ те, çĕмĕрĕлсе пĕтнĕскер, çавăнта хăй вилĕмне тупса, чарăнса ларнă.

Совет бронебойщикĕпе фашистсен танкĕсем хушшинче пулса иртнĕ паттăр çапăçу вырăнĕпе иртсе пынă чухне, çынсем Хĕрлĕ Çарăн хăюллă боецне асăнса, çĕлĕкĕсене хываççĕ, «Абдулов паттăра—тайма пуçăм!»—теççĕ.

А. ГЛЕБОВ.

Хирĕ тислĕк кăлараççĕ

КӲКЕÇ. Шемшер ялсоветĕнчи «Серп и молот» колхоз уя 1.600 лав, «Шăнкăс» колхоз 350 лав тислĕк кăларчĕ. Тислĕк кăларас ĕçре И. Седов, В. Шумилов, Е. Пантелеймонов тата Федоров юлташсем тăрăшса ĕçлесçĕ

Д. СЕДОВ.

Çуракине хатĕрленмелли фронтовой уйăхлăх

Вăрлăх çитмен колхозсене пулăшар

Комсомольски районри „Трактор“ колхозăн патриотла пуçарăвне республикăри колхозсемпе колхозниксем ăшшăн йышăнса илĕç

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, пирĕн колхоз çулран çул пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Иртнĕ çул эпир кашни гектартан вăтам шутпа 13-шер центнер ытларах тĕштырă пухса илтĕмĕр. Сурхи тулă кашни гектартан 18-шер центнер, сĕлĕ 17-шер центнер тухрĕ.

Çакă пире государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татма, тĕштырра 1944 çулшăн та пĕтĕмĕшпех парса татма май пачĕ. Çавăн пекех аш-какай, çу тата ытти продуктсем парса татнă хыççăн колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограмм тĕштырă валеççе патăмăр. Пирĕн колхозниксем вăрçăн йывăр кунĕсенче те пуян пурăнаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те çитĕнӳ турăмăр. Пирĕн колхозра халь майракаллă шултăра выльăхсем план тăрăх 42 пулмалла, 72 пур, 102 сурăх пур, 40 сысна вырăннне 60 пур, тата ытти те. Кашни сăвакан ĕнерен вăтамран 1450-шар литр сĕт суса илтĕмĕр. Пирĕн 4 доярка хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх сĕтçу илчĕç.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, иртнĕ çул эпир лаша вити, ĕне вити тата выльăх-чĕрлĕхсене пăхакансем валли çурт туса лартрăмăр.

Колхозри 18 вăкăра кӳлсе ĕçлеме вĕрентрĕмĕр, вĕсемпе халĕ тислĕк турттарнă çĕрте тата фермăри ĕçсенче кăна мар, вăрмантан вутă турттарнă çĕрте те усă куратпăр.

Пирĕн колхоз çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ. Лашасем самăр, хăмăтсем, йĕнерчĕксем тата пур тĕрлĕ ут таврашĕсем те ытлашшипех. Сунассемпе урапасем те çителĕклĕ таранах хатĕрлерĕмĕр. Вăрлăх çителĕклĕ, ăна пĕтĕмпех сортласа хунă, типĕ ампарта пăхса усратпăр. Плугсене тата ытти ялхуçалăх машинисене пурне те юсанă.

Пирĕн колхоз «Победа» колхозпа ăмăртса ĕçлет. Ĕçре эпир пĕр-пĕрне яланах пулăшса пыратпăр. Сăмахран, хальхи вăхăтра пирĕн тимĕрçĕ лаççинче «Победа» колхозăн ялхуçалăх машинисене юсаççĕ. Эпир малалла та çапла ĕçлеме шутлатпăр.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн маршалĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказ — Тăван çĕршыв приказĕ пулса тăрать. Юратнă çулпуçăмăр приказне пурнăçа кĕртессишĕн эпир хамăрăн вăйхала çеç мар, пурнăçăмăра та шеллесе тăмăпăр. «Вăрçăра çĕнтерес тесен, тăшмана вилĕм шăтăкĕ патне илсе çитерсе, ăна унта тĕртсе ямалла», — тесе кăтартса пачĕ Сталин юлташ. Кăçал вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ тырпул туса илни, çуракине кăтартуллăн ирттерсе тырпул никĕсне ăнăçлăн хывса хăварни—тăшмана çĕнтерме фронтовиксене тӳрремĕн пулăшни пулать.

Кăçал уйрăм колхозсен вăрлăхлăх тырă çитменнине шута илсе, эпир юнашар колхозсене хамăр вăрлăхпа 25 гектар акса пама йышăнтăмăр. Эпĕ хам цереметленĕ тырăран юнашар колхозсене виçĕ гектар çĕрне акса хăварма вăрлăх уйăрса паратăп.

Т. ИВАНОВА,
Комсомольски районри «Трактор» колхозăн председателĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксем тăрăшса ĕçлеççĕ

СĔРПӲ. Чурачăкри комсомолецсемпе çамрăксем вырăнти удобренисене тăрăшса пухаççĕ. Купта 4 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 5 тонна кĕл пухнă. Вырăнти удобренисене пухас ĕçе комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Филиппова юлташ ертсе пырать.

П. МИТРОФАНОВ

Лашасем çине чунсăррăн пăхмалла мар

Çĕмĕрле районĕнчи хăшпĕр колхозсенче лашасене хакламаççĕ, вĕсем çине чунсăррăн пăхаççĕ. Кунти руководительсем çавăн пирки ытларах калаçма юратаççĕ, конкретлă ĕç туни курăнмасть.

Вăрман Тăванти «Самолет» колхозра 1943 çулта чылай лаша вилнĕ. Çакă вăл пĕтĕмпех лашасене япăх пăхнинчен, вĕсене хĕненинчен килнĕ. Лашасене пăхма шанчăклă çынсене уйăрман, апат-çимĕçе ним вişине пăхмасăр расходлаççĕ, ĕçлемелли лашасене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетмен. Колхоз правленийĕ, лашасем çине чунсăррăн пăхакансене çирĕп ответ тыттарас вырăнне, асăрхаттарнипех ирттерсе ярать. Пĕрремĕш бригадăра, акă, иртнĕ çулта 9 лаша вилнĕ. Анчах колхоз правленийĕ уншăн конюхсене улăштарнипех ирттерсе янă. Ветработник пуçарнипе кăна Ефимов конюха суда парса пĕр çул çурă ĕçлеттермелле тунă. Нумаях та пулмасть хытă хĕненипе телĕр лаша вилнĕ, уншăн та никама та ответ тыттарман.

Халĕ колхозра 84 лаша, вĕсенчен ĕçлекенисем — 64, вĕсем пурте пекех ырхан, хăшĕсем кăрчанкăлă. Кĕркунне колхозăн лаша апачĕ чылай пулнă, анчах виçесĕр те тирпейсĕр тытнă пирки, вăл часах пĕтет. Çакна пĕле-тăркачах колхоз правленийĕ нимĕнле мерă та йышăнмасть.

Тукасри «Заря» колхозра та лашасем çине чунсăррăн пăхаççĕ. Кăçал икĕ эрне хушшинчех 3 лаша вилнĕ. Ку вăл апат çукшăн та мар, конюхсем япăх ĕçленипе пулнă. Вĕсем лашасене вăхăтра апат памаççĕ, шăвармаççĕ. Вĕсен айĕнчи тислĕке вăхăтра кăлармаççĕ, лашасем сивĕ çĕртех тăраççĕ. Ку çеç те мар, ĕçлесе килнĕ лашасене кунта ытти сенчен уйрăм пăхмаççĕ, вĕсене ĕçрен килсен пăхса йышăнмаççĕ.

«Заря» колхозра комсомолăн пуçламĕш организацийĕ те пур. Анчах вăл колхозри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн сахал тăрăшать. Пуçламĕш организаци секретарĕ коммунистка Михайлова витене лаша илме çеç пырать, çитменлĕхсене курать пулин те, ун çинчен конюхсене асăрхаттармасть.

Мăн Улхашри «Красноармеец» колхоз районра чи пысăкки шутланать. План тăрăх унта 220 лаша пулмалла, халĕ 155 лаша пур. Вĕсенчен чылайĕшĕсем ырхан. Мĕншĕн? Колхоз правленийĕ (председателĕ Лепешкин), кĕркунне апат тулăх тесе, лашасене нормăпа çитермен, конюхсем апат-çимĕçе кам мĕнле май килнĕ, çавăн пек расходланă.

Тĕрĕслӳ комиссийĕсем палăртнă тăрăх, районри колхозсенчи лашасенчен вăтам вăйлисем çурри те çук тата вĕсен хисепĕ чакса пырать. Иртнĕ çулта районри колхозсенчи 707 кĕсререн шĕтĕмпе те 139 тиха çеç илнĕ. Çавна пула ĕнтĕ район паян кун та лашасен йышне ӳстерес тĕлĕшпе республикăра кая юлса пырать, вăл январĕн 1-мĕшне лашасем ĕрчетмелли плана 79 процент кăна тултарнă.

Ыйтас килет: ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕпе райисполком çуракине япăх тата сахал лашасемпех ирттерме шутлаççĕ-ши, е вĕсем МТС çине шанаççĕ-и? Тĕрĕссипе илсен, МТС çине те шанмалли ех çук, тракторсене юсас ĕç чăтма çук юлса пырать.

ЛИСИН.

Ишлей районĕнчи «Осоавиахим» колхоз лашасене лайăх пăхса усрать. Колхоз лашисем ăшă та таса витере тăраççĕ. **Укерчĕк çинче:** «Осоавиахим» колхозăн лаша вити.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Укерчĕк çинче: Шăмăршă МТС-ĕн малта комбайнерĕ Фадеев юлташ. Вăл икĕ комбайнпа 220 гектар вырăнне 820 гектар вырса пуçтарнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Фронтовой уйăхлăхра çуракине хатĕрленсе çитетпĕр

ИШЛЕЙ, февралĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче районри пур колхозсенче те колхозниксен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çав пухусенче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине тата тăванла республикăсем хушшинчи ăмăртура Чăваш республики хăй çине илнĕ обязательствăсене сӳтсе-явăç. Ку тĕлĕшпе колхозсенче районри активран 31 çын ĕçлет. Кашни колхозрах фронтовой уйăхлăхра тумалли ĕçсене плансемпе палăртса колхозниксен пухăвĕсенче çирĕплетеççĕ.

Çак кунсенче пирĕнпе ăмăртакан Сĕнтĕр районĕн представителĕсем районри колхозсенче пулчĕç. Вĕсем çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине 7 колхозра тĕрĕслерĕç. Тĕрĕсленĕ хыççăн: «Красный пахарь», «Труд», «Клевер» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнине, çав вăхăтрах «Искра» колхоз япăх ĕçленине палăртрĕç. Çак колхозăн председателĕ Ильин юлташ çуракине хатĕрленесси çинчен шутламасть те. Малта ялсоветĕн председателĕ Изыкова юлташ та ку колхозăн ĕçĕпе интересленмест. Ялсовет ларăвĕсенче нихăçан та çураки ыйтăвĕсене сӳтсе-явман.

— Çуракине хатĕрленесси вăл колхозсен ĕçĕ,—тесе ларать Изыкова юлташ.

Районри хăшпĕр колхозсен акма вăрлăхсем çитмесçĕ. Вăрлăх çитмен колхозсене юнашар колхозсем пулăшаççĕ. Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз «Искра» колхоза 50 центнер, Тельман ячĕпе тăракан колхоза 52 центнер вăрлăхлăх тырă парать. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз «Серп и молот» колхоза 20 центнер, «Çĕнĕ пурнăç» колхоз «Парижская Коммуна» колхоза 180 пăт сĕлĕ пачĕ.

Фронтовой уйăхлăхра пирĕн районри колхозсем çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

К. ФЕДОРОВ,
Çĕрпӳ пайĕн главнăй агрономĕ.

Пĕр лаптăк çĕр те акмасăр ан юлтăр

Иртнĕ çул пирĕн колхозниксем хастарлă ĕçлерĕç. Ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра та пысăк пахалăхпа туса ирттертĕмĕр. Агротехника мероприятийĕсене вăхăтра туса пынине пула тата вырăнти удобренисемпе анлăн усă курнипе пула, иртнĕ çул эпир кашни гектартан вăтамран 13,7-шер центнер тĕштырă туса илтĕмĕр.

Кăçал та çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе çитрĕмĕр. Иртнĕ çул эпир юнашар колхозсене 600 центнер вăрлăх парса пулăшнă. Кăçал та хамăрпа юнашар, Куйбышев ячĕпе тăракан колхоза 30 центнер вăрлăх пама йышăнтăмăр. Эпĕ хамăн тырăран пĕр гектар çине акмалăх вăрлăх паратăп.

Кăçал эпир иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлесе пысăк тухăçлă тырă туса илĕпĕр, тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара вăйлăрах пулăшса пырăпăр.

ВАСИЛЬЕВ,
Канаш районĕнчи «Красное пламя» колхоз председателĕ.

Вырăнти удобренисем пухаççĕ

ЕЛЧĔК. Районри малта пыракан колхозсем вырăнти удобренисене пикенсех хатĕрлеççĕ.

Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1590 лав тислĕк, «Хунав» колхоз 714 лав тислĕк уя кăларнă. Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхоз та аван ĕçлет. Уя 1500 лав тислĕк кăларчĕ. 27 центнер кĕл тата 30 центнер фекали пухса хатĕрленĕ. Вырăнти удобренисене хатĕрлес тата тислĕке уя кăларас ĕçре кунта вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. Юлашки вăхăтра кăна 21 вăкăра кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ. Вĕсемпе уя тислĕк турттараççĕ, кĕл, фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ.

И. ПЕТРОВ.

Ют çĕршывсенче

Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа ССР Союзĕн ют çĕршывсенчи посольствисемпе миссийĕсенче йышăнусем пулса иртнĕ

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). СССР посольствинче паян Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа йышăну пулса иртнĕ.

Йышăнура Англи правительствин членĕсем, союзлă правительствăсен членĕсем, доминионсен особоуполномоченнăйĕсем, Эйзенхауэр генерал, авиацин главнăй маршалĕ Артур Теддер, имперски генеральнăй штаб начальникĕ Алан Брук тата Англипе союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен ытти аслă офицерĕсем, Англи парламенчĕпе Чехословакин государственнăй совечĕн членĕсем, Франци халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетăн Лондонри делегацийĕн членĕсем, дипломати корпусĕ, çавăн пекех тата искусствăпа наука деятелĕсем нумайĕшĕ, обществăллă организацисемпе тĕрлĕ ушкăнсен представителĕсем пулнă.

СИДНЕЙ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). ССР Союзĕн Канберр хулинчи миссийĕнче февралĕн 21-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура Австрали премьер-министрĕ Кэртен, тинĕс министрĕ (вăлах боеприпас министрĕ) Мэйкин, шалти ĕçсен министрĕ Коллингс, парламент членĕсем, дипломати корпусĕ, общество организацийĕсемпе ĕненекенсен организацийĕсен представителĕсем т. ыт. те пулнă.

АНКАРА, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян СССР посольствинче Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура премьер-министр Сараджоглу, ют çĕршыв ĕçсен министрĕ Нуман Менеменджиоглу, Турци правительствин ытти членĕсем те, Турци генеральнăй штабĕн ертсе пыракан составĕпе генеральнăй штаб начальникĕн заместителĕ генерал Салих Омуртак, меджлис депутачĕсем, нейтральнăй тата туслă çĕршывсен дипломати представителĕсем, çавăн пекех тата Турци пичетĕпе ют çĕршывсенчи пичет представителĕсем, Турцин общество тата политика деятелĕсем чылай пулнă.

Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа ют çĕршывсенче митингсемпе парадсем пулса иртнĕ

Февралĕн 23-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа Лондонра йышлă халăхлă митинг пулса иртнĕ. Митингра правительство органĕсен, Англин, союзниксен тата доминионсен хĕçпăшаллă вăйĕсен представителĕсем, общество организацийĕсен представителĕсем, Англи промышленнăçĕн чи паха 22 отраслĕнче ĕçлекен рабочисен представителĕсем, çавăн пекех тата Совет Союзĕн Лондонри колонийĕн членĕсемпе вĕсен пуçлăхĕ — ССР Союзĕн Англири посолĕ Гусев юлташ пулнă.

Митингра Шалти ĕçсен министрĕ Герберт Моррисон сăмах тухса каланă.

Çавăн пекех йышлă халăхлă митингсем тата Мельбурнра (Австрали), Веллингтонра (Çĕнĕ Зеланди) пулса иртнĕ.

Алжирта Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа французсен, американецсен тата акăлчансен çарĕсен пысăк парачĕ пулса иртнĕ. Парадра Франци халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетăн членĕсем, французсен консультаци ассамблейин делегачĕсем, союзлă армисен генералĕсем, ССР Союзĕн посолĕ Богомолов юлташ тата дипломати корпусĕн членĕсем пулнă. Курма пухăннă халăх парадри çарсене хавасланса саламланă. (ТАСС).

ЭЙЗЕНХАУЭРПА КЛАРК ГЕНЕРАЛСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРА САЛАМЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăпа Совет Союз туслăхĕн наци совечĕ Эйзенхауэрпа Кларк генералсенчен телеграммăсем илни çинчен пĕлтернĕ. Çав телеграммăсенче Эйзенхауэрпа Кларк Хĕрлĕ Çар наступленине тунине ырласа саламлаççĕ.

Эйзенхауэр генералăн саламлă телеграмминче çапла каланă:

«Икĕ çул та сакăр уйăх каялла пирĕн пĕрлехи тăшман, цивилизациллĕ тĕнчен тăшманĕ, вăрçă пуçлатăп тесе каламасăр, вырăс çĕрĕ çине сутăнчăкла пырса кĕчĕ. Вăл ют çĕршывсене тытса илес тата тустарас программăна пурнăçласшăн пулса çапла турĕ. Çакăн хыççăн пĕтĕм тĕнче оборонăллă вăрçăн историри чи паттăр ĕçĕсенчен пĕрне курчĕ—вырăс çарĕн салтакĕсем нацистсен çар машинине пыра-пыра çапнин пĕтĕм вăйне хăйсем тӳссе тăрса, тăшмана татăклăнах чарчĕç. Хальхи вăхăтра эпир вăрçăри тата чаплăрах ĕçе куратпăр: вырăс çарĕн çав офицерĕсемпе салтакĕсемех калама çук вăйлă наступлени туса пыраççĕ, тăшмана тата хытăрах пыра-пыра çапаççĕ, ăна хăй çаратса пĕтернĕ çĕр çинчен хăйĕн ишĕлнĕ йĕннине хăваласа кĕртеççĕ. Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă кун эпĕ совет салтакĕсем наступленин тунине саламлатăп, çак куна вĕсем хăйсем çав тери лайăх паллă туса хăвараççĕ. Пирĕн малашне питĕ вăйлă çапăçмалла пулатьха, анчах та Гитлерăн крепоçне çурçĕр, кăнтăр, хĕвелтухăç тата хĕвеланăç енĕсенчен пырса хупăрланă союзниксен салтакĕсен паттăрлăхĕ эпир çĕнтерессине пĕлтерсе тăрать».

СОВЕТ ГРАЖДАНĔСЕНЕ ПУЛĂШАКАН ИРАНЕЦСЕН КОМИТЕЧĔН ĔÇĔСЕМ

ТЕГЕРАН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕç захватчикĕсенчен екен курнă совет гражданĕсене пулăшакан иранецсен комитечĕ хăй ĕçне пĕтернĕ май йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура правительство членĕсем, премьер-министр Сохейли, Иранăн государство, общество, политика деятелĕсем, çавăн пекех тата ССР Союзĕн Тегеранри посолĕ Михайлов юлташ пулнă. Комитет председателĕ генерал Ахмеди, шах арăмĕ хушнипе (вăл çак комитетăн хисеплĕ председателĕ пулса тăрать), Михайлов юлташа 6 миллион риал укçа илмелли чек панă. Комитет купсăр пуçне Иран провинцийĕсенче те укçа чылай пухнă. Вăл укçасене комитет представителĕсем провинцисенчех Совет Союзĕн представителĕсене панă. Ахмеди генералпа Михайлов юлташ пĕр пĕрне саламласа сăмахсем каланă

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен çарĕсен Италири главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăпа Англин çар карапĕсем Формиа тата Анцио районĕсене çаплах тупăсемпе пенĕ.

Анцио районĕнче Америкăн 5-мĕш армийĕн пехотипе бронетанковăй чаçĕсем тăшманăн хаяр атакисене 48 сехет хушши чăтса тăнă хыççăн тăшмана каялла сирсе янă. Темиçе çĕр нимĕçе тыткăна илнĕ. Тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ. Германи авиацийĕ активлăн кĕрешнĕ.

5-мĕш армин тĕп фронтĕнче француз чаçĕсем тăшманăн вăйлă атакине сирсе янă.

Çанталăк начар тăнă пулин те, Англин 8-мĕш армийĕн разведка тăвакан чаçĕсем яланхи пекех активлăн кĕрешнĕ, Тăшмана пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер те пуринчен ытла тăшмана плацдарм районĕнче пыра-пыра çапнă.

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: февралĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман катерĕсен ушкăнĕ Анцио патне çывхарма хăтланнă, анчах та вăл катерсене американецсен хурал тăракан карапĕсем сапаласа янă. Пĕр катерĕ, тупă йĕтри шăтарса кĕнипе, çурăлса сирпĕнсе кайнă, тепри çыран хĕррине ывтăнса тухса ӳкнĕ.

Паянхи кун пур фронтсенче те самаях лăпкă иртнĕ.

Авиаци çаплах тăшманăн çар объекчĕсем çине бомбăсем тăкнă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Хĕвелтухăç Боснире, Рогатица çывăхĕнче, гитлеровецсемпе, усташасемпе тата четниксемпе вăйлă çапăçаççĕ. Словенире, Ново-Место таврашĕнче, Германин 600 çынлă колоннине аркатса тăкнă.

Халăха ирĕкĕ кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Ликра тăшманăн полкне аркатса тăкнă. Турополье районĕнче çав çарăн бригади темиçе çĕр усташана çĕмĕрсе тăкнă, тăшманăн 40 салтакне тыткăна илнĕ тата çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен тинĕс-çар вăйĕсем çаплах Бисмарк утравĕсене хупăрласа тăраççĕ. Юлашки эрнере Бисмарк тинĕсĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче Японин 44 суднипе 164 самолет пĕтнĕ.

Союзниксен авиацийĕ çаплах Рабаул хулине атакăлать, японецсен икĕ аэродромне хытă ишĕлтерсе пĕтернĕ.

ВАШИНГТОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). США-н тинĕс министрстви çапла пĕлтерет: Америка çарĕсем Эниветок утравне (Маршаль утравĕсем) пĕтĕмĕшпех йышăннă.

Америкăн Япони шывĕсенче кĕрешсе çӳрекен икĕ подводнăй лодки Японин 15 грузовой суднине шыва путарнă. Çав суднăсем пĕтĕмпе 68,200 тонна таяççĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ. 00567. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.